Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

66 (7383) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи августăн (çурла) 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Вырма – 2006

## Кĕске вăхăтра çулчĕ



Пĕрлешÿллĕ хуçалăхсенчи уй-хирсемпе йĕтемсем çинче талăкĕпех вырма шавĕ тăрать. “Волга” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра та паян урăхла пулма пултараймасть. Кунти ĕçченсен çак кĕркунне 435 гектар çинчен тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем пуçтарса кĕртмелле. Иртнĕ кунсенче хуçалăх 10 гектар çинчи пăрçана çулса çапса тĕшĕлерĕ те ĕнтĕ. Ку ĕçре Андрей Федорович Пайков механизатор **(сăн ÿкерчĕкре)** хăйне çирĕплетсе панă “Енисей-954” комбайнпа тăрăшуллă пулчĕ.

Тухăç пирки хальлĕхе калаçма иртерех-ха, анчах ун çине механизатор тирпейлĕхĕ витĕм кÿни пирки те А. Пайковăн иккĕленÿ çук: тивĕçлĕ хăвăртлăхпа выратăн, “хир карапне” юхăнтармасăр тытса тăратăн – тухăçпала савăнатăн. Кунпа пĕрлех уяр кунсемпе туллин усă курасси те çĕр ĕçченĕн ку чухнехи тĕп тĕллевĕ. Çаксене нихăшне те кун йĕркинчен кăлармасăр ĕçлесе “Волга” хуçалăх кĕске хушăрах 100 гектара яхăн тырă-пулăна вырса кĕртме пултарчĕ.

Куç шăрçине сыхлана пек пăхса ÿстернĕ тырă-пулăна пухса кĕртсе пÿлмене управа хурасси малалла пырать.



**А. БЕЛОВ**
**сăн ÿкерчĕкĕсем.**

Ял хуçалăх ыйтăвĕсем тавра

## Пĕрле ĕçленине мĕн çиттĕр?

***Вăхăт питĕ хăвăрт иртет. Çĕр ĕçченĕшĕн пушшех те. Паянхи кунах илер-ха, акă, мĕн кăна тумалла мар унăн. Уяр кунăн кашни саманчĕпе усă курса пулса çитнĕ тыр-пула пухса кĕртмелле, çĕр пулăхлăхне ÿстерес тесе тимлемелле, кĕр тырри акма вăхăт çитсе килет: ку енĕпе те вăр-вăр пулмалла. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче лару-тăру епле пуласси те тÿрремĕнех çĕр ĕçченĕн çаврăнăçулăхĕпе çыхăннă: выльăх апатне пахалăхлă тата çителĕклĕ янтăламалла. Ик алла пĕр ĕç мар, çĕр ĕç çулла ял çыннишĕн. Чиперех ĕлкĕрсе пырать-и вăл паян? Шăпах çакăн пирки калаçрăмăр та ĕнтĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе А.Н. ИВАНОВПА.***

**– Альберт Николаевич, çĕр ĕçченĕшĕн ответлă тапхăртан – вырмаран пуçлар-ха калаçăва. Унăн малтанхи эрни мĕнле пĕтĕмлетÿсем тума май парать?**

– Пĕтĕмпе тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем 17 400 гектар йышăнаççĕ пулсан, пĕтĕм лаптăкăн 14 проценчĕ чухлĕ вырса çапнă. Иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен ĕç хăвăртлăхĕ пысăкрах. Анчах çакă лăпланмалли сăлтав мар. Тырă пиççе çитнĕ, апла пулсан уяр çанталăкăн кашни саманчĕпе туллин усă курмалла.

Палăртмалла, “Герой”, “Восток” хуçалăхсенче вырма кал-кал пырать. Ильич ячĕпе хисепленекен, “Оринино”, «Свобода», “Ударник” хуçалăхсенче те тыр-пула пухса кĕртес ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

**– Тыр-пул тухăçĕ мĕнле?**

– Çырма урлă сиксе каçмасăр хоп! теме каламан та-ха ваттисем. Тухăç мĕнле пулни пÿлмене кĕрсе выртсан тĕп-тĕрĕс паллă пулать. Хальлĕхе вара çакна палăртмалла. “Ударник”, “Свобода” хуçалăхсенче кĕрхи культурăсем гектартан 25-30 центнер тухаççĕ. Çавăн пекех “Восток”, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче те тухăç çакăнтан каях мар. Асăннă хуçалăхсем акана вăхăтра тата пахалăхлă ирттернин кăтартăвĕ ку. Ахальтен каламаççĕ вĕт ир тăракан кайăк тутă пулнă тесе. Районти вăтам тухăç вара 21 центнер.

Тÿрех каламалла. Çурхи культурăсен тухăçĕ пысăках мар. Кунта вĕсене хăшпĕр хуçалăхсенче вăхăтра акса хăварманни те япăх витĕм кÿчĕ.

Паянхи тыр-пул тухăçĕ пĕлтĕр кĕр аки епле ирттернипе те тачă çыхăннă. Çавăнпа та çитес çулхи тыр-пул пирки те кăçалах шухăшламалла. Ку тĕлĕшпе те ĕç калăпăшĕ пĕчĕк мар. Пĕтĕмпе кăçал 5050 гектар çинче çĕр хатĕрлесе кĕрхи культурăсем акмалла. Паянхи кун тĕлне çак çĕр калăпăшĕнчен çуррине кĕр аки валли хатĕрленĕ. Кĕрхи культурăсене акмалли вăхăт вара çитрĕ: агротехника требованийĕсемпе килĕшÿллĕн августăн 10-мĕшĕнчен пуçăнмалла ку ĕçе. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе çанă тавăрса çине тăрарах ĕçлемелле. Палăртни – чикĕ мар, май килнĕ таран ытларах акса хăварма тăрăшмалла кĕрхи культурăсене.

**– Вырма çине пысăк тимлĕх уйăрнă май ытти уй-хир ĕçĕсем куçран вĕçерĕнмеççĕ-и?**

Паян куçран вĕçертмелле мар тепĕр ыйту вăл – çĕр пулăхне ÿстересси. Пĕтĕмпе 2 пин. гектар ытла лаптăка извеçлемелле, кали, фосфор удобренийĕсем сапмалла. Ку тĕлĕшпе “Моргаушагропромхими” тинех йĕркеллĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çавăнпа та ял хуçалăх предприятийĕсем асăннă предприятипе ку тĕлĕшпе килĕштерсе пĕр тĕллевлĕн ĕçлессе шанас килет.

Паянхи çивĕч ыйтусенчен тепри вăл – вăрлăх хатĕрлесси. Хальлĕхе вăл пĕтĕмпе 600 тонна ытла пур. Унăн пахалăхне тĕрĕслесе хатĕрлес ĕç халĕ малалла пырать. Пирĕн тĕллев – пахалăхлă вăрлăх çеç акмалла. Тыр-пул тухăçĕ шăп çакăнтан тата çĕре вăхăтра хатĕрлесе акана пахалăхлă ирттернинчен килет. Тата вăрлăх хатĕрлессипе патшалăх та пулăшать. Ку тĕлĕшпе кăçал валли пирĕн района 2 миллион тенкĕ укçа уйăрнă пулсан, 790 пин тенкипе çур акинче усă курнă. Кĕр акинче асăннă суммăн юлашки 60 проценчĕпе усă курмалла пирĕн.

Выльăх апачĕ хатĕрлессипе илес пулсан, нумай çул ÿсекен курăксене 1-мĕш хут çулса пĕтернĕпе пĕрех. Техникăпа çыхăннă çитменлĕхсене пула «Передовикра», “Сеятельте” симĕс ĕççи вăраха кайрĕ.

Район умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри вăл – майракаллă шултра выльăхсен шутне ÿстересси, уйрăмах сумалли ĕнесене. Çавăнпа та хатĕрлеме палăртнă 12752 тонна утă чикĕ пулмалла мар. Ку ĕçре каюпа та усă курмалла. Май пур таран сенаж хатĕрлессипе те тимлемелле. Силослăх культурăсемпе ĕçлени те выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерессинче усăллă теççĕ специалистсем.

**– Аш-какай, сĕт туса илесси çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхĕнченех пуçланать. Сăмахăмăра выльăх-чĕрлĕх çине куçарнă май, кунти лару-тăрупа тĕплĕнрех паллаштарсан та аванччĕ.**

– Ку тĕлĕшри ÿкерчĕке уçăмлатма чи малтан кăçалхи кăтартусене илсе парам. Çак тапхăрта 3102 тонна аш-какай туса илнĕ районĕпе. Иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 11,9 процент ытларах. Сĕт туса илессипе те ÿсĕмсем пур. Пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 6,8 процент чухлĕ нумайрах. 29163 тонна сĕт суса илтĕмĕр.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсемпе

## Хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленсе

***Çанталăк кĕр еннелле сулăнчĕ. Вăхăт хăвăрт иртет. Кĕçех, ак, çумăрлă кунсем пуçланĕç, çанталăк та сивĕтĕ. Çав вăхăтра пăсăлмĕ-и кăмăл районта пурăнакансен? Хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленес ĕç районта епле пырать? Çак ыйтусем тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ эпир район администрацийĕн капиталлă строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертÿçин çумĕпе – районти “Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани” МУП директорĕпе Н.В. ЛЮБИМОВПА. Калаçăвăмăра вара иккĕмĕш ыйту хуравĕнчен пуçлар. Акă мĕн каласа пачĕ кун пирки Николай Валентинович:***

– Паянхи куна районти вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ газ котельнăйĕсемпе ĕçлеме ирĕк паракан лицензие илчĕç ĕнтĕ. Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ те ку тĕлĕшпе тĕрĕслев витĕр тухнă. Хăш-пĕр пĕчĕк кăлтăксене пĕтернĕ хыççăн çитес кунсенчех çав лицензие илет.

Çакна палăртмалла. Культура учрежденийĕсем ял тăрăхĕсем çине куçнă май халĕ ял тăрăхĕсенче газ хуçалăхĕшĕн яваплă специалистсем пур. Иртнĕ эрнере вĕсемпе ятарлă вĕренÿ пулчĕ. Газ котельнăйĕсен операторĕсемпе вара çакнашкал вĕренĕве сентябрьте йĕркелеççĕ.

Халĕ Çатракасси шкулĕпе район центрĕнчи “Солнышко” ача садĕнче ăшă трассин пăрăхĕсене улăштараççĕ. Çак ĕçе Калайкасси шкулĕнче интернат еннелле каякан ăшă трассинче те туса ирттермелле.

Тумалли ĕçсем татах та пурха. Тепĕр икĕ газ хуранне юсамалла. Паян пур учрежденисенче те вак-тĕвек ĕçсене пурнăçлас ĕç пырать.

**– Нумай хваттерлĕ çуртсенче мĕнлерех юсав ĕçĕсем туса ирттертĕр?**

– Хĕле хатĕрленес ĕç муниципаллă пурăнмалли фондра та малалла пырать. Ку таранччен вара 6 çуртра шыв пăрăхĕсене тĕплĕн юсарăмăр. Пĕр çуртра ăшă трассине улăштартăмăр, тепĕр çуртра ку ĕçе çак уйăхра туса ирттеретпĕр.

Çав хушăрах çуртсен çемçе çивиттийĕсене юсасси те малалла пырать. Унсăр пуçне çакăн йышши çивиттине тăрăллă çивиттипе те улăштаратпăр. Мăн Сĕнтĕрте пĕр çуртра пурнăçланă çак ĕçе. Кĕçех Муркашри завод урамĕнчи 17-мĕш çуртра та улăштарма пуçлатпăр ăна. Проекчĕ хатĕр. Малтанласа валли укçа-тенки те пур.

Пытарма кирлĕ мар, хваттерте пурăнакансенчен çивитти юхни пирки заявленисем килкелерĕç. Çак уйăхра вара çав вырăнта çивиттисене юсаса пĕтермелле пирĕн. Нумаях юлмарĕ ĕнтĕ ку ĕç. Çавăн пекех Муркашра та, Москакассинче те нумай хваттерлĕ çуртсен подъезчĕсене юсарăмăр.

Сăмаха вĕçленĕ май вара нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансене çакăн пирки аса илтерес килет. Кирек епле вактĕвек юсав ĕçне тума та укçа кирлĕ. Çавăнпа та çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн укçана вăхăтра тÿлесчĕ. Хăвăр кăмăла пăсмасăр хĕл каçасси çакăнтан та нумай килет. Хăвăр çинчен çеç мар, кÿршĕсем çинчен те шутлăр.

**– Тавтапуç, Николай Валентинович, хуравсемшĕн.**

**Л. ПАВЛОВА**
**калаçнă.**

Çитес суйлав ыйтăвĕсемпе

## Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр

***ЧР тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ октябрĕн 8-мĕшĕнче иртесси пирки хаçат вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. Ку хутĕнче суйлавра çĕнĕлĕхсем чылай.***

**– Суйлав округĕсене мĕне пăхса уйăрнă?**

– Пĕтĕмпе 22 округ пулать. Вĕсем халичченхи территори округĕсемпе пĕр килмеççĕ. Кашни округра вăтамран 45 пин суйлавçă шутланать. Уйрăмлăх 15 процент таран пулма пултарать. Çавна пула хăш-пĕр районсене пайлама, тепринпе пĕрлештерме те тивнĕ. 8-мĕш № Муркаш суйлав округне те Муркаш районĕсĕр пуçне Элĕк районĕ те кĕрет. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта вара çĕнĕрен 6 округ йĕркеленĕ. Тĕп хулара халĕ 8 округ.

**– Суйлав фончĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Вĕсен калăпăшне чылай пысăклатнă. Пĕр мандатлă округран суйланакан кандидатăн суйлав фончĕн калăпăшĕ 1,5 миллион тенкĕ таран пулма пултарать. Партисен вара ку калăпăш – 30 миллион тенкĕ.

**– Кандидатсемшĕн миçе çынна алă пустарни кирлĕ?**

– Кандидата тăратнă çынсемшĕн алă пустармалли срок – июлĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса августăн 18-мĕшĕнче 18 сехетчен. Саккунпа килĕшÿллĕн округри суйлавçăсен пĕтĕмĕшле йышĕн 1 проценчĕ (450 сасă) алă пусни кирлĕ. Кам вара кун пек аппаланасшăн мар, вăл салук хывма пултарать. Кандидат – 225 пин тенкĕ, парти – 4,5 миллион тенкĕ.

**– Хăçан суйлав иртнĕ шутланать?**

– Суйлавçăсен 20 проценчĕ суйлава хутшăнса сасăласан суйлав иртнĕ шутланать.

Вырма – 2006

## Çĕнтерÿçĕсене палăртнă

Ял хуçалăх предприятийĕсенче вырма ĕçĕсене туса ирттерекен механизаторсен конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетекен комиссин ларăвĕ иртнĕ. Унта августăн 1–7-мĕшĕсенчи ĕç итогĕсене тишкернĕ. Çĕнтерÿçĕсем тесе çаксене палăртнă тата укçан премилеме йышăннă:

**«Дон-1500» комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче (ĕç норми 280 тонна):**

1-мĕш вырăна никама та паман.

2-мĕш вырăнта – **Владимир Алексеевич СТЕПАНОВПА** («Ударник» хуçалăх, 223 тонна) **Валерий Александрович СОЛОВЬЕВ** («Свобода» хуçалăх, 221 тонна) комбайнерсен экипажĕсем.

3-мĕш вырăнта – **Валерий Васильевич ЕРДУКОВ** («Герой» хуçалăх, 189 тонна) комбайнер экипажĕ.

**«Енисей-1200» комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче (ĕç норми 224 тонна):**

1-мĕш вырăна никама та паман.

2-мĕш вырăнта – **Геннадий Евтихеевич МАШИНИН** («Чемеево» хуçалăх, 150 тонна) комбайнер экипажĕ.

3-мĕш вырăнта – **Ростислав Витальевич ИЛЬИНПА** («Оринино» хуçалăх, 102 тонна) **Анатолий Николаевич ЕРМАКОВ** («Рассвет» агрофирма, 102 тонна) комбайнерсен экипажĕсем.

**СК-5 «Нива» комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче:**

1-мĕш вырăна никама та паман.

2-мĕш вырăнта – **Валерий Федорович ДОБРЯНСКИЙ** (Суворов яч. хис. хуçалăх, 150 тонна) комбайнер экипажĕ.

3-мĕш вырăнта – **Валериан Александрович ДИМИТРИЕВ** («Восток» хуçалăх, 107 тонна) комбайнер экипажĕ.

### РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ВЫРМА ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Çав шутран кĕрхи тулă (августăн 9-мĕшĕ тĕлне, процентпа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 0 | 0 |
| “Волга” | 17 | 100 |
| “Восток” | 27 | 100 |
| «Герой» | 29 | 100 |
| ЗАО «Агро-Урожай» | 29 | 44 |
| К. Иванов яч. хис. | 19 | 100 |
| Ильич яч. хис. | 30 | 100 |
| “Колос” | 0 | |
| Ленин яч. хис. | 2 | 100 |
| “Лидер” | 3 | 43 |
| “Нива” | 19 | 78 |
| “Оринино” | 37 | 100 |
| “Передовик” | 7 | |
| “Свобода” | 27 | 100 |
| “Сеятель” | 0 | |
| Суворов яч. хис. | 19 | 74 |
| ООО АФ “Рассвет” | 11 | 100 |
| ОАО АФ “Нива” | 0 | 0 |
| “Ударник” | 19 | 100 |
| “Хлебороб” | 6 | |
| Чапаев яч. хис. | 9 | |
| «Чемеево» | 16 | 100 |
| Чкалов яч. хис. | 4 | |
| КФХ Михайлов А.Н. | 0 | 0 |
| КФХ Матвеев А.В. | 12 | 100 |
| КФХ Сретинский С.К. | 0 | |
| КФХ Ямангеев В.Г. | 0 | 0 |
| КФХ Краснов В.С. | 0 | |
| КФХ Горбунов В.В. | 0 | |
| КФХ Толстов А.И. | 0 | 0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **14** | **69** |

Район уй-хирĕсенче вырма ĕçĕсем пуçланчĕç. Августăн 9-мĕшĕ тĕлне районĕпе тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 2461 гектар çинче (планпа 17403 гектар) çулнă тата вырнă. Асăннă кун тĕлне Е. Андреев яч. хис., «Колос», «Сеятель» хуçалăхсенче, «Нива» агрофирмăра вырмана тухман-ха. Ĕç çинче хаклă вăхăт вара çухалать. Кĕрхи культурăсенчен тулăна 760 гектар çинчен (планпа 1094 гектар), ыраша 185 гектар çинчен (планпа 905 гектар) пуçтарса илнĕ. К. Иванов яч. хис., «Ударник», «Волга», «Герой», «Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче çурхи культурăсене пухса кĕртме тытăннă.

Улăма 858 гектар çинчен пухса тирпейленĕ. Ку вăл тыр-пул вырса çапнин 36 проценчĕ пулать.

Хуçалăхсенче 112 комбайн шутланать. Вĕсенчен 74-шĕ ĕçленĕ.

Вырма ĕçĕсем пуçланнипе пĕрлех выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем те пыраççĕ. Çак вăхăта нумай çул ÿсекен курăксене 10323 гектар çинче (93 процент) çулнă.

Утă 8743 тонна (69 процент), сенаж 23889 тонна (95 процент), силос 11331 тонна (54 процент) хатĕрленĕ.

## Саламлатпăр

Муркашра пурăнакан ырă кăмăллă та таса чун-чĕреллĕ **Светлана Никифоровна КОВАЛЕВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе хисеплесе саламлатпăр.

Эпир сана чун-чĕререн юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Утас кун-çулу такăр, ĕмĕрÿ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр.

**Пысăк салампа тус-юлташусем.**